Централизациленӗ
библиотека системин
тӗп библиотеки

# «Чуна ҫывăх кӗнекесем»

Гаврил Луҫ ҫыравҫă та сăвăҫ 80 ҫул
тултарнă тӗле

**Библиографи указателӗ**

Йӗпреҫ, 2015

ББК 78.381.9:83-52
Ч 91

12 +

**«Чуна çывăх кĕнекесем». Гаврил Луç çыравçă та сăвăç 80 сул тултарнă тĕле** : библиографи указателĕ / Централизациленĕ библиотека системин тĕп библиотеки ; хатĕрлекенĕ Е. А. Воронцова, О. И. Емельянова. – Ибреси, 2015. – 22 с.



ГАВРИЛ СПИРИДОНОВИЧ

ЛУÇ (ЛОСЕВ)

# Гаврил Луç пурнăçĕпе пултарулăхĕ

Гаврил Спиридонович Лосев – Чăваш Республикинчи писательсен союзĕн члене, Йĕпреç районĕнчи Çемен Элкер ячĕллĕ журналистсен премийĕн лауреаче тата Чăвашсен обществăпа культура центрĕ çирĕплетнĕ Алексей Талвир ячĕллĕ преми лауреаче, район хаçачĕн обществăлла корреспонденче.

Гаврил Луç 1935 ç. апрелĕн 2-мĕшĕнче, Йĕпреç районĕнчи Хумри Ишек ялĕнче вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Хумри Ишек – çав тери илемлĕ, икĕ урамлă ял. Поэт çапларах çырать хăй çуралса ӳснĕ ялĕ пирки:

*Савап сире, уй-хир, вăрман-çаран,*
*Эсир пирĕ вăй-хал парса ӳстернĕ.*
*Илемлĕ Хум…Хĕвел хĕртсе пăхсан,*
*Юлташсемпе ĕçрен килсен, ялан*

*Эпир унта шыва кӗрсе чӳхеннӗ.*

*...Çуралнӑ ялӑм манн çӑтмах пекех,*

*Ӑçта пулсан та эс ӑна манаймӑн.*

*«Сенкер экран» çунать кашни килтех*

*Çак сӑнсене епле чунтан эс савман*!

Гаврил Луç ачалӑхӗ çити-çитми, йывӑр пурнӑçра иртнӗ. Ашшӗ - Спиридон Иванович 1937 ç. колхоза кӗмест, совет влаçӗн юхӑмне хирӗçлет тесе, ним айӑпсӑрах, виçӗ çын элекӗпе репрессиленӗ. Вара вӑл Сталин саманин тыткӑнӗнчен каялла таврӑнайман. Кил хуçин, çемье тӑрантӑраканӑн çакӑн пек йывар шӑпа пулса тухнишӗн амӑшне, Степанида Никитичнӑна (Спалюк), йывӑр хуйхӑ çапса ӳкерет. Вара тӑватӑ уйӑх чирлесе выртнӑ хыççӑн, 1941 ç август уйӑхенче, пурнӑçран уйрӑлса каять. Пилӗк ача хӑр тӑлӑха тӑрса юлаçе, тӑлӑх-турат нушине тӑраничченех астивеççӗ вӗсем. Пурнӑçа чунтан

юратни, ачасен тăванлăх туйăмĕ çирĕппи хăрушă выçлăхпа мен пур йывăрлахă чăтса ирттерме май парать. Çапла вара выçлăх та, пурнăç кукар-макăрĕ те, çын элекĕ те çапса хуçман Луççене. Пĕчĕккен вĕсем ура çине тăнă, тĕнче тăрăх саланнă. Хăрушă вăрçă çулăмĕ сӳнсен, çĕр-шывра лару-тăру лайăхланма, малалла аталанма тытăнать.

Г. Луç 1943 ç. перремĕш класа ялти шкула çӳреме пуçлать. Çĕнĕ Выçли шкулĕнче çичĕ класс пĕтерет. Тем пек малалла вĕренес килне унăн, анчах нуши поэт умĕнчех чупса пынă:

…Тӳсет иккен этем чĕри, мăнтарăн,
Сывлăх пулсан, çитсессĕн çимелли.
…Çапла. Тапать этем чĕри васкавлăн,
Пурнастăн вăл. Мехел çитсен пурнать.
Ĕне пулсассăн сĕт çиме пулатчĕ,
Çук, усрайман ĕне хăр-тăлăхсем.
Ик аппăшĕ çĕр-шыв ĕсне каятчĕç,
Килте вара ялан кĕçĕннисем…

Çапах та пуçне усман çамрăк. Уншăн вĕренӳ çăл куçĕ – алла лекекен мĕн пур кĕнеке пулса тăнă. 1954 çулта. ялта библиотека ĕçлеме пуçланать..

Кăшт пушă вахăт пулсанах вăл кĕнеке тĕнчине ăнтăлать, чăваш литературипе çывăх паллашать, ăна чунтан юратса пăрахать.Çеçпĕл Мишшин «Хурçă шанчăк» тата Ухсай Яккăвен «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекисене вуласа тухнă хыççăн чĕрине поэзии кăварĕ хыпса илет. Çав кăвар паянхи кунччен те пĕрре те сӳнмен.

Хăйĕн вĕренмелле тесе çырнă малтанхи сăввисене шкула çӳренĕ çулсенчех кĕвĕленĕ.

1956 ç. Гаврил Луçăн пĕрремĕш сăвви районта тухса тăракан «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» («Çĕнтерӳшен») хаçатра кун çути курнă.

Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай çамрăк çыравçăн сăввисене пысăка хурса хакланă. Аслă поэтпа, Çемен Элкерпе – çыру çӳретни те паллă. Аслă ентешĕн сĕнĕвесем Луçа поэзии çулне такăрлатма пулăшаççĕ. Текех вăл поэзии урхамахне алăран вĕçертмен. Хуть ăçта ĕçлесен те республикăри хаçат-журналистсемпе çыхăну тытсах тăнă. Сăвăç çырса кăтартнă чăваш тенчи манăслă, илемлĕ, мал ĕмĕтлĕ. Унăн пĕр пĕчĕк кĕтессинче чун-чĕрепе пуян, ентешлĕхпе тăванлăх

туйăмĕпе вăйлă, несĕлсен тымарне хăртма паман сăпайлă, ĕçчен çер çынни пурăнать:

Хăватлă, аслă халăх çитĕнтерчĕ
Çӳнат сарса вĕçме хĕр-ывăлсем
Хăйсем патне чĕнсе-шим куç хĕсеççĕ
Паттăрсене çап-çутă çăлтăрсем

Гаврил Луçан çĕнĕрен те çĕнĕ сăвăсем хаçатсенче пичетленеççĕ.

1958 ç. Гаврил Луçа ялти клуб заведующине çирĕплетеççĕ. Тӳрех, пуçĕпех культура ĕçне пуçанать. Ялти клуб заведующинче вун пилĕк çул ĕçлет. Халăха тăван тавралăх илемне курма, тăван тавралăх илемне курма, тăван чĕлхене, культурăна юратма хавхалантарса пынă.

Г. С. Лосев 9 кĕнеке хатĕрлесе пичетлене : «Юратупа эп килтĕм тĕнчене» (1999), «Амăшĕпе хĕрĕ» (2001), «Тăван Тавралăх» (2003), «Чупать-ха пурнăç урхамахĕ…» (2005), «Чыспах вĕçлесчĕ хамăр ĕмĕре» (2014) сăвă кĕнекисем, «Хум хĕрринче çуралнă юрату», «Юрату – тĕнче тытăмĕ» (2010), «Кунĕ пур вет çут тĕнчен – пурăнасчĕ ыранччен» (2013)прозалла хайлавĕсен пуххи (2008), «Сонетăмсем – çунатăмсем» (2008)

сонетсен ярӑмӗ. Произведенисенче автор хӑйне савӑнтаракан, хурлантаракан е тарӑхтаракан ыйтусене хускатать: ыррине ырлать, япӑххинчен шӳтлесе тӑрӑхлать, киревсӗрлӗхпе чунсӑрлӑха сивлет, вӗсенчен асӑрханма сӗнет. Прозӑлла хайлавсен геройӗсем – таван ял ҫыннисем, пӗрле выляса-кулса ӳснӗ тантӑшсем, ҫав тӑрӑхри ватӑсемпе яш-кӗрӗм. Поэт хайлавӗсенче юрату теми – пысӑк вырӑнта. Чан таса юратӑва тивӗҫлӗ сӑнар сӑвасенче – яланах тӳрӗ чуплӑ та тирпейлӗ, ӗҫ енчен алли-ури ҫӑмӑл тата кӑмӑл – сипет енчен ҫӳллӗ шайра тӑракан ял ҫынни. Унан кашни сӑввинче Тӑван ҫӗршыв шӑпишӗн пӑшӑрханни, чӑваш ҫынни ҫак пурнӑҫра мӗнле вырӑн йышӑнни, чӑвашӑн чунне хӑйӗн витӗр кӑларса хаклани тӗкӗр ҫинчи пекех яр-уҫҫӑн курӑнса тӑрать.

Гаврил Лус ҫырса кӑтартнӑ чӑваш тӗнчи мӑнаҫлӑ, илемлӗ, мал ӗмӗтле. Унӑн пӗр пӗчӗк кӗтессинче чун-чӗрепе пуян, ентешлӗхпе тӑванлӑх туйӑмӗсемпе вӑйлӑ, несӗлсен тымарне хӑртма паман сӑпайлӑ, ӗҫчен ҫӗр ҫынни пурӑнать. Пӗтӗм йывӑҫ-курӑка, чӗр чуна, кашни ҫынна хавас кунти чӑваш. Ячӗшӗн мар ҫынпа ҫын пек пулма пӗлет

вăл. Инкек-синкек килсе тухсан та, хуйхă-суйхă пырса çулăхсан та, шансах тăр: эс кунта пĕччен мар, санпа пĕрлеял халăхĕ, сан инкекӳ – ял çыннин инкекĕ , санăн савăнăçу – ял-йыш савăнăçĕ.

## Гаврил Луç хайлавĕсем

***Кĕнекесем***




**Луç, Г. С.**

Юратупа эп килтĕм тĕнчене : [сăвăсем] / Гаврил Лосев. – Шупашкар, 1999.

Ку кĕнекене «Портсигар ăшĕнчи çыру» поэма кĕнĕ. Поэт хайлаври шухăша чăн пурнăçран илнĕ. Автор хăйĕн геройĕсен чун-чĕрине, кăмăл туйăмне уçса парас тĕллев лартнă, вĕсен хăтланăвне психологи тĕлĕшĕнчен сăллтавлама пултарнă.




**Луç, Г. С.**

Амăшĕпе хĕрĕ : [поэма] (Мать и дочь) / Гаврил Лосев. – Чебоксары, 2001. – 64 с.

Икĕ пайран тăракан поэма. Хайлава пурнăçра пулнă тĕслĕхе тĕпе хурса тата Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă хĕрсемпе хĕрарăмсене халалласа çырнă.




**Луç, Г. С.**

Тăван тавралăх : [поэмăсем, сăвăсем, сонечĕсем] / Гаврил Луç. – Шупашкар, 2003. - 56 с.

Кĕнекене автор юратнă мăшăрне Лидия Ивановна Лосевана халалланă.




**Луç, Г. С.**

Чупать-ха пурнăç урхамахĕ… / Г. С. Лосев. – Шупашкар, 2005.

Кĕнеке авторăн пурнăç философине, кунçулне тата ĕçне-хĕлне уçса парать.




**Луç,Г. С.**

Сонетăмсем – çунатăмсем / Г. С. Лосев. – Шупашкар, 2008. – 64 с.

«Сонетăмсем – çунатăмсем» кĕнекере Гаврил Спиридонович Лосев Гаврил Луç поэтăн иртнĕ ĕмĕрĕн 50-90-мĕш çулĕсенче тата юлашки вăхăтра хайланă сонечĕсем пичетленĕ.




**Луç, Г. С**

Хум хĕрринче çуралнă юрату : калавсем, очерксем, аса илӳсем / Гаврил Луç. - Шупашкар : Çĕнĕ Вăхăт, 2008. - 98 с.

Сборникри калавсемпе очерксенче тĕл пулакан тĕп геройсем – пĕтĕмпех пурнăçран илнĕ сăнарсем. Автор вĕсене юратса та чунтан хисеплесе калăплать, чунне уçса калаçать, ыррипе мухтанать, усаллине сивлет.




**Луç, Гаврил.**

Юрату - тĕнче тытăмĕ : сонетсем, сăвăсем, калавсем, очерксем / Гаврил Луç. - Шупашкар : Çĕнĕ Вăхăт, 2010. - 95 с.

Кĕнекене юрату çинчен хайлавĕсем, сонетсем, сăвă-саламсем, калав-очерксемпе аса илӳсем кун çути курнă. Кĕнекене вуласа тухсан, автор калашле, «çут тĕнчере нумай-нумай пурнас килет».




**Луç, Гаврил.**

Кунĕ пур вĕт çут тенчен – пурăнасчĕ ыранччен: сăвăсем, сонетсем, калавсем. – Шупашкар : ЧПГĂИ, 2013. – 96 с.

Кĕнекере паянччен кун çути курман, 2011-2013 çç. çырăннă сăвăсем, сонетсемпе калавсем кĕнĕ.




**Луç, Гаврил.**
Чыспах вĕçлесчĕ хамăр ĕмĕре : суланă сăвăсем / Гаврил Луç. – Шупашкар : ЧПГĂИ, 2014. – 136 с.

## Публикацисем

**Лосев, Г. С.**

Вăрçă чарăннă çул : автобиграфиллĕ калав / Г. С. Лосев. - (Номертен номере) // Çĕнтерӳшĕн. - 2011. - №8, №9/10(29 кăрлач). - С. 7.

**Луç, Гаврил.**

Волокаламск тăрăхне хӳтĕленĕ : [вăрçăра пулнă Гаврил Тимофеевич Фадеев çинчен] / Гаврил Луç // Çĕнтерӳшĕн : [Йĕпреç районĕн хаçачĕ]. - 2010. - 19 çу (№ 57/58). - С. 5.

**Луç, Гаврил .**

"Ĕçтешĕмсем, сыв пуллашатпăр кив çулпа..." : [сăвă] / Гаврил Луç // Чăваш хĕрарăмĕ. - 2009. - 31 раштав (№ 52). - С. 2.

**Луç, Гаврил.**

Ирсеренех тухатăп урама : триптих / Гаврил Луç // Чăваш хĕрарăмĕ. - 2010. - 3-9 ака (№ 12). - С. 10.

**Луç, Гаврил.**

Карелире : [çул çӳрев очеркĕ] / Гаврил Луç // Чăваш хĕрарăмĕ. - 2011. - 15-21 кăрлач (№ 1). - С. 5 ; 29 кăрлач-4 нарăс (№ 3). - С. 10

**Луç, Гаврил.**

"Кĕт мана, анне, эпĕ таврăнатăп!" : [Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуçне хунă Гаврил Кузьмич Кузьмин çинчен] / Г. С. Луç // Çĕнтерӳшĕн : [Йĕпреç районĕн хаçачĕ]. - 2010. - 29 çу (№ 62/63). - С. 2.

**Кузнецов, Г. В. (журналист ; 1943-).**

Подарок своим землякам [Текст] : [о новой книге поэта и писателя Гаврила Спиридоновича Лосева, уроженца деревни Хом-Яндобы Ибресинского района] / Геннадий Кузнецов // За победу. - 2013. - 11 июня (№ 49). - С. 3. - То же на чувашском языке: Çĕнтерӳшĕн, 11 çĕртме (июнь).

**Луç, Гаврил (1935-).**

Пĕлĕш-поэтсене : [диптих] / Г. Луç // Çĕнтерӳшĕн. - 2008. - 27 раштав (№ 153-154).

**Луç, Гаврил.**

Çĕнĕ çул - сыхă пул, кивĕ çул - сывă пул: сонет ; Ленинкасси каччи: триптих : [сăвăсем] / Г. Луç. - (Поэзи) // Çĕнтерӳшĕн. - 2008. – 10 кăрлач (№ 1). - С. 6.

**Луç, Гаврил.**

Çивĕч ăс-тăнлă пул : [сăвă] / Г. Луç // Çĕнтерӳшĕн. - 2007. - 2 çĕртме (№ 44). - С. 5.

**Луç, Гаврил.**

Çирĕп сывлăх - чăн телей : Татьяна Порфирьевна Максимована сума суса : сонет / Г. Луç // Çĕнтерӳшĕн. - 2007. - 23 çу (№ 40-41). - С. 8.

**Луç, Г.**

Сухатмарам сынлаха : сава / Г. Луç // Хыпар.- 2000. - 32 май.

**Луç, Гаврил.**

Сывлăх сыхлавĕн ĕçченĕ : [Хумри Ишек ялĕнчи сывлăх сыхлавĕн çуртĕнче ĕçлекен Татьяна Порфирьевна Максимова çинчен, Йĕпреç районĕ] / Г. Луç. - (Санăн çыннусем, район) // Çĕнтерӳшĕн. - 2009. - 18 чӳк (№ 145). - С. 5.

**Луç, Г.**

Телейсер ачалăх тата шăнкăрч чеппи : калав / Г. Луç // Çентерушен. - 2003. - 22 февраль.

**Луç, Г.**

Тимсер Петер : юптару / Г. Луç // Хыпар.- 1998.-7 декабрь.

**Луç , Г.**

Хум херринче суралнă юрату: калав / Г. Луç // Танташ. - 2001. - №22-23.

**Луç, Гаврил.**

Шухăшăн - çуначĕ çăмăл, çĕнĕ çулăн - ырă кăмăл : [диптих] / Гаврил Луç // Чăваш хĕрарăмĕ. - 2009. - 5-11 авăн (№ 35). - С. 10.

**Луç, Гаврил.**

Шыва путмарăмăр, çынна сутмарăмăр : [триптих] / Гаврил Луç // Хыпар. - 2010. - 13 нарăс (№ 26/27). - С. 12.

**Луç, Гаврил.**

Эпир - вăрçă асапне чăтса ирттернисем : [сăвă] / Г. Луç // Çĕнтерӳшĕн. - 2009. - 3 юпа (№ 125/126). - С. 7.

**Луç, Гаврил.**

Эсир ĕмĕрлĕхе пĕрле: Афанасьевсене [Текст] : [сăвă] / Г. Луç // Çĕнтерӳшĕн. - 2009. - 26 çурла (№ 109). - С. 2.

**Луç, Гаврил.**

Юратнă ĕç - ĕмĕрлĕх [Текст] : Галина Васильевна Афанасьевана : [сăвă] / Г. Луç // Çĕнтерӳшĕн. - 2008. - 27 авăн (№ 111-112).

**Луç, Гаврил.** Юрату виç кĕтеслĕхĕ : калав / Г. Луç // Çĕнтерӳшĕн. - 2010. - 25 авăн (№ 115/116). - С. 7.; 29 авăн (№ 117). - С. 3.

**Луç, Гаврил.**

Юрату - тĕнче тытăмĕ : чăн пулни / Гаврил Луç. - (Литература) // Чăваш хĕрарăмĕ. - 2010. - 14-20 çурла (№ 32). - С. 10.

## Авторĕ çинчен

**Васильев, Г. В.**

345 кĕнеке парнеленĕ : [Гаврил Луç (Лосев) сăвăç Йĕпреç районĕнчи Хурамал вăтам шкулне хăйĕн библиотекинчи 345 кĕнекене парнелени çинчен] / Г. Васильев. - (Кун хыççăн кун) // Хыпар. - 2010. - 28 ака (№ 85). - С. 1.

**Гордеев, Д.**

Пĕчĕк çын шăпи – çершыв шăпиех : тишкерӳ / Д. Гордеев // Тăван Атăл. – 2005. - № 3.

**Ефимов, С.**

Хайлавесенчи санаресенче - ял сыннисем / С. Ефимов // Сентерушен.-2000 - .6 февраля.

Ефимов, С. Е. Çăлăнса юлассишĕн кăна шухăшлатăп…» / С. Е. Ефимов // Çĕнтерӳшĕн. – 2004. – 7 ака.

**Кузнецов, Г. В.**

Все знакомые лица / Г. Кузнецов. - (Çĕнĕ кĕнеке) // За победу. - 2008. - 9 июля (№ 78).

**Кузнецов, Г. В.**

Подарок своим землякам : [о новой книге поэта и писателя Гаврила Спиридоновича Лосева] / Геннадий Кузнецов // За победу. - 2013. - 11 июня (№ 49). - С. 3. - То же на чувашском языке: Çĕнтерӳшĕн, 11 çĕртме (июнь).

**Кузнецов, Г. В.**

С любовью к землякам : [к 80-летию поэта, писателя Гаврила Спиридоновича Лосева] / Геннадий Кузнецов. – (Твои люди, район). – За победу. - 2015. - С. 7.

**Раевская, Галина.**

Сонет хыççăн сонет шăрçалать : [Гаврил Луç çыравçă çинчен] / Г. Раевская. - (Хаçат тусĕсен пултарулăхĕ) // Çĕнтерӳшĕн. - 2009. - **4** ака (№ 41/43). - С. 10.

**Раевская, Г.**

Юратупа вал килне тенчене / Г. Раевская // Таван Атал. - 2005.-№3. – С. 72-73.

**Чангина, Н. И.**

Гаврил Луç поэзийĕн хăй евĕрлĕхĕ / Наталия Чангина ; В. А. Ендеров ред. - Шупашкар : Çĕнĕ Вăхăт, 2009 - 91 с.